26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943 МАЕ 30 ВЫРСАРНИКУН 112(6349) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Сывлăшран тапăннине хирĕç кĕрешме яланах хатĕр пулар!

Хĕрлĕ Çар вăйлăн пыра-пыра çапнипе кисреннĕ тата кризиса лекнĕ тăшман кирек мĕнле авантюра тума та, пире хирĕç кĕрешнĕ çĕрте темĕнле ирсĕр майсемпе усă курма та чарăнса тăмĕ. Совет ĕççыннийĕсен сывлăшран тапăннине тата химиллĕ тапăнăва хирĕç кĕрешме яланах хатĕр тăрас пулать. Сывлăшран тапăннине хирĕç кĕрешме тунă формированисене кунран-кунах лайăхлатса, вĕрентсе пымалла, унти çынсене тата мĕнпур халăха сывлăшран тапăннине хирĕç кĕрешмелли средствăсемпе тата кĕрешӳ меслечĕсемпе пĕлсе усă курма вĕрентмелле, сывлăшран тапăннине хирĕç кĕрешес ĕçе ертсе пымалли майсене вĕçĕмрен лайăхлатмалла, сывлăшран тапăннинчен уйрăм çынсене тата мĕнпур халăха хӳтĕлесе хăвармалли средствăсене яланах юсавлă тата хатĕр тытса тăмалла.

Сывлăшран тапăннине тата химиллĕ тапăнăва хирĕç кĕрешмелли правилăсене (çутта маскировка тăвасси, убежищĕсене, пушарпа кĕрешмелли тата химиллĕ тапăнуран сыхланмалли япаласемпе оборудованисене юсавлă тытса тăрасси т. ыт. те) чылай çĕрте тивĕçлипе пурнăçласа пымаççĕ-ха. Канаш, Çĕмĕрле, Сĕнтĕрвăрри тата Çĕрпӳ хулисенче çутта маскировка тумалли правилăсене пăсаççĕ. Шупашкар хулинче те çутта маскировка тумалли правилăсене пăснă фактсем сахал мар.

Хăшпĕр тимсĕр çынсем „фронт пирĕнтен инçере-ха" тесе хăйсене хăйсем лăплантарма пăхаççĕ. Çакăн пек айванла шутлани пысăк йăнăш туни пулать. Шупашкарти тир-сăран комбинатĕнче халĕ те харпăрхăйне хӳтĕлемелли группăсене организацилемен, сывлăшран тата химиллĕ тапăнуран сыхланмалли средствăсем çук. Унта ĕçлекенсем сывлăшран тапăннă чухне тата химиллĕ тапăнусем вăхăтĕнче мĕнле сигналсем пулассине пĕлмеççĕ.

Промышленноçпа транспорт предприятисене, чугунçула, коммуналлă хуçалăхăн предприятийĕсене кирек мĕнле условире те тикĕс, йĕркеллĕ ĕçлеттермелле. Çавăнпа сывлăшран тата химиллĕ тапăнуран сыхланас ĕçе пур çĕрте те лайăх организацилемелле.

Чăваш республикин чылай районĕсем урлă Хусан чугунçулĕ иртет. Пурне те паллă, çак чугунçул фронта апат-çимĕç, хĕçпăшал, çар хатĕрĕсем, çынсем турттарса тăмалли пысăк магистраль пулса тăрать. Апла пулин те, чугунçул линийĕ çывăхĕнче вырнаçнă Куславкка, Вăрмар, Канаш, Вăрнар тата ытти хăшпĕр районсенчи чылай ялсенче çутта маскировка тумаççĕ. Сывлăшран тапăнассинчен сыхланас тĕлĕшпе унти районсен совечĕсем йышăннă распоряженисене мĕнле пурнăçа кĕртнине йĕркеллĕ тĕрĕслесе тăмаççĕ, айăплисене ответ тыттармаççĕ.

Сывлăшран тапăнассинчен тата химиллĕ тапăнуран сыхланмалли правилăсене пăсакансене çирĕп ответ тыттармалла. Вĕсене МПВО штабĕсен, судпа прокуратура тата милици органĕсен, вырăнти советсен вăрçă вăхăтĕнчи законсем тăрăх айăпламалла.

Сывлăшран тапăнассине тата химиллĕ тапăнăва хирĕç кĕрешес ĕçĕн ăнăçлăхĕ унта ĕççыннисен анлă массийĕ хутшăннинчен, вĕсен пултарулăхĕнчен килет. ПВХО ĕçне вĕренмен çын ку ĕçре нимĕн чухлĕ усă та параймасть. Çавăнпа Осоавиахим организацийĕсен мĕнпур ĕççыннисене ПВХО ĕçне вĕрентмелле, кружоксем организацилесе унти занятисене йĕркеллĕ ирттермелле. Анчах чылай районсенче ПВХО-на вĕрентес ĕç питех те сӳрĕккĕн пулса пырать. Осоавиахимăн Çĕрпӳ райсовечĕ тата унăн председателĕ Герасимов юлташ ПВХО-на вĕрентес ĕçе конкретлăн ертсе пымаççĕ.

Ишлей, Хĕрлĕ Чутай, Чкаловски районсенче тата Улатăр хулинче кăçалхи пĕрремĕш кварталта ПВХО-на вĕрентес ĕçе чылай лайăхлатнă, Ишлей районĕнче (Осоавиахим райсовечĕн председателĕ Милютин юлташ) ĕççыннисене ПВХО-на вĕрентсе пĕтернĕ.

Халăха ПВХО ĕçе вĕрентессине тĕпрен вăйлатмалла. Парти организацийĕсен, ВКП(б) райкомĕсемпе горкомĕсен çарĕç отделĕсен МПВО организацийĕсем, сывлăшран тапăнассинчен харпăрхăйне хӳтĕлеме тунă группăсем мĕнле ĕçленине, вĕсем сывлăшран тапăнассине тата химиллĕ тапăнăва хирĕç кĕрешме мĕнле хатĕрленнине куллен контрольлесе тăмалла. Осоавиахим организацийĕсен ПВХО ĕçне 1941 çулта вĕреннĕ çынсене халĕ тепĕр хут çĕнĕ программа тăрăх вĕрентме тытăнмалла.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Майăн 28-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Майăн 28-мĕшĕнче Кубань таврашĕнче, Новороссийскран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри районра, çапăçусем пынă. Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Майăн 27-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 50 нимĕç автомашинине çити пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, боеприпассен 4 складне сирпĕнтерсе янă, 3 чугунçул эшелонне çĕмĕрнĕ, темиçе артиллери батарейине пусарса лартнă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче пирĕн чаçсем нимĕç салтакĕсене пĕр рота таран вĕлерсе пĕтернĕ, 2 оруди пĕтерсе тăкнă, 6 блиндажа ишĕлтерсе антарнă тата тăшманăн темиçе артиллери батарейине пусарнă. Пĕр участокра нимĕç пехотин отрячĕ пирĕн оборонăн малти хĕррине разведка туса пĕлме хăтланнă. Пирĕннисем пулеметсемпе тата пăшалсемпе хаяррăн пеме тытăнсан, гитлеровецсем пĕр йĕркесĕр каялла чакнă.

* * *

Балаклейăран кăнтăртарахра пер чаçăн артиллеристчĕсем темиçе блиндажпа дзота ишĕлтернĕ, миномет батарейине тата 8 огневой точкăна пĕтерсе тăкнă. Кунсăр пуçне, пирĕн артиллери грузсем турттарса пыракан нимĕç автомашинисен колоннине салаласа янă. Тăшманăн 20 автомашинине çити çĕмĕрнĕ тата пĕтерсе тăкнă.

* * *

Дон çинчи Ростовран хĕвеланăçнерехре пирĕн артиллеристсем нимĕç пехоти пухăнса тăнă вырăна персе, 150 нимĕç салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Пĕр гвардейски подразделенин минометчикĕсем 3 орудие, улттă кĕпçеллĕ минометра пĕтерсе тăкнă тата тăшманăн 10 автомашинине ытла çунтарса янă.

* * *

Çурçĕр-Хĕвеланăç фронтĕнче гитлеровецсем пирĕн пĕр подразделенин боецĕсем хӳтĕлесе тăнă опорнăй пункта атакăланă. Тăшман çывхарсан, подразделени командирĕ Шустов лейтенант пăшалсемпе, пулеметсемпе пеме хушнă. Гитлеровецсем, пысăк çухатусем тӳссе, васкавлăн каялла чакма тытăннă. Пирĕн боецсем, тăшмана хăваласа пырса, темиçе çынна тыткăна илнĕ тата трофейăсем тытса илнĕ.

* * *

Ровно облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ пĕр пысăк чугунçул станцийĕнчи нимĕç гарнизонне сасартăк атакăланă. Совет патриочĕсем хаяррăн çапăçса тăшманăн 100 салтакĕпе офицерне ытла пĕтернĕ, 3 паровоза, 17 вагона тата паровоз мастерскойне, энерги парса тăнă электростанцие сирпĕнтерсе янă. Киров ячĕпе тăракан отрядри партизансен ушкăнĕ шоссе çулĕ патĕнче засадăра ларса нимĕç бронемашинине персе сиенленĕ тата груз турттарса пыракан 3 тоннăллă машинăна çунтарса янă.

* * *

Нимĕçсен пикировка тăвакан бомбардировщикĕсен 1-мĕш эскадринчи 2-мĕш группăн 6-мĕш отрядĕнчи летчик Эрвин Штейлер лейтенант, майăн 22-мĕшĕнче Курск районĕнче тыткăна лекнĕскер, çапла каласа панă: «Пирĕн отряд аэродром çинчен вĕçсе хăпарнă чухне вăл отрядра 9 самолетчĕ. Пирĕнпе пĕрлех ытти отрядсем те вĕçсе хăпарчĕç. Пире Курска çитсе унти чугунçул станцийĕ çине бомбăсем пăрахма хушнăччĕ. Курска çитессин 5 километр юлсан, пире вырăс истребителĕсем тĕл пулчĕç. Зенитнăй артиллери вăйлăн персе тăчĕ. Эпĕ хамăн бомбăсене Курска çитиччĕнех пĕр йĕркесĕр пăрахса пĕтертĕм. Пирĕн пĕтĕм отряд хăйĕн бомбисене васкавлăн пăрахса пĕтерсе, каялла çавăрăнса кайма хăтланчĕ. Анчах та стройпа пите хĕн пулчĕ, мĕншĕн тесессĕн сывлăшра вырăс истребителĕсем пуçпулса тăчĕç. Эпĕ хамăн отрядри самолетсем пĕрин хыççăн тепри çĕре персе аннине куртăм. Эпĕ хам сывлăшра пурнинчен те вăрахрах тытăнса тăтăм. Унтан вырăс истребителĕ манăн машинăн радиаторне персе шăтарчĕ те манăн та вара анса лармалла пулчĕ. Кунта, тыткăнра, эпĕ хамăн отрядри 5 экипажăн летчикĕсене тĕл пултăм».

Майăн 29-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Майăн 29-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле фронтра нимĕнле паллă улшăнусем те пулман.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче пĕр чаçăн артиллеристчĕсем тăшманăн 7 дзочĕпе блиндажне ишĕлтерсе антарнă, пĕр оруди тата 5 пулемет пĕтерсе тăкнă. Старши сержант Шумилин юлташ ертсе пыракан снайперсен ушкăнĕ икĕ кун хушшинче тăшманăн 43 салтакĕпе офицерне вĕлернĕ. Разведчиксем Чубченко, Глушенков, Савенков, Бозицкий, Перминов тата Соломин юлташсем юлашки кунсенче виçĕ хутчен разведкăна кайса, 30 гитлеровеца вĕлернĕ тата темиçе çынна тыткăна илнĕ.

* * *

Лисичанск районĕнче пирĕн подразделенисем тăшмана атакăланă, штык вĕççĕн тытăçса кайса, гитлеровецсене тĕрекленĕ позицисенчен çапса кăларнă.

Нимĕçсем икĕ хутчен контратака тунă, анчах та вĕсене каллех каялла ывăтса янă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 80 вилли выртса юлнă. Пирĕннисем трофейăсем тытса илнĕ тата тыткăна илнисем пур.

* * *

Дон çинчи Ростовран хĕвеланăçнерехре пирĕн артиллерипе минометсенчен персе тăшман пехотин 2 ротине салаласа янă, нимĕçсен 2 орудине пĕтерсе тăкă, 3 дзотне, блиндажне тата 2 наблюдательнăй пунктне ишĕлтерсе антарнă.

* * *

Ленинград фронтĕнче пирĕн подразделенисемпе снайперсем нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 200 çынна ытла вĕлернĕ. Артиллери персе тата авиаци штурмласа нимĕçсен артиллерипе минометсен 22 батарейине пусарса лартнă, 12 дзота тата 10 землянкăна ишĕлтерсе антарнă, тăшманăн çар грузĕсем турттарса пыракан темиçе автомашинипе лавне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Совет Союзĕн Геройĕ капитан Глинка командир пулса ертсе пынипе пирĕн истребитель-летчикĕсен ушкăнĕ нимĕçсен «Мессершмитт—109» йышши 10 самолечĕпе тата «Фокке — Вульф — 190» йышши 2 самолечĕпе тĕл пулнă.

Сывлăшри хаяр çапăçура совет летчикĕсем тăшманăн 6 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Витебск облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ уйăх çурă хушшинче тăшман гарнизонĕсене темиçе хутчен те тапăнса, нимĕçсен фашистла оккупанчĕсене 300 çынна ытла пĕтерсе тăкнă. Çав отрядри подрывниксен ушкăнĕ май уйăхĕн варринче нимĕçсен горючи турттарса пыракан эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Çав облаçра кĕрешекен тепĕр отрядри партизансем тăшманăн 3 çар поездне ӳпĕнтерсе янă. 3 паровоз, войскăсем турттарса пынă 12 вагон тата автомашинăсем тиенĕ 10 платформа çĕмĕрĕлсе кайнă.

* * *

Днепропетровск хулинче пурăнакан çынсен пĕр ушкăнĕ фашистсен тыткăнĕнчен тарса тухнă та фронт линийĕ урлă каçнă. Вĕсем çапла каласа кăтартнă: «Хулара чуна хăратакан шăплăх тăрать. Çамрăксене тата ытти вăйпитти çынсене те нумайĕшне Германие каторгăна вăйпа хăваласа илсе кайрĕç. Нимĕçсем пиншер совет гражданĕсене персе, хĕнесе, асаплантарса е вырăнта аптăратса вĕлерчĕç. Днепропетровск çыннисем нимĕçсем Пушкин проспектĕнче тата Чичерин урамĕнче тунă тискер ĕçсене аса илсен, халĕ те чĕтресе каяççĕ. Анчах фашистсен пусмăрĕнче пурăнаççĕ пулсан та, Днепропетровск çыннисем парăнмаççĕ. Совет çыннисем усал тăшмана хирĕç тавăраççĕ, ăçта май килнĕ çĕрте нимĕçсене пур çĕрте те сăтăр тăваççĕ».

* * *

Греци патриочĕсем нимĕç аэродромне тапăннă та хуралта тăракансене пурне те вĕлерсе тăкнă, вара темиçе самолета вут тивертнĕ. Партизансем Аргос çывăхĕнче вырăнти çынсем пулăшнипе итальянецсен отрядне аркатса тăкнă. Хаяр тытăçура 40 итальянеца ытла вĕлернĕ. Амфиклея районĕнче чугунçул çинчи рабочисем 8 паровоз тата нумай вагона юрăхсăра кăларнă, чугунçул тăрăх горючи турттарса пынă составa вут тивертсе çунтарса янă.

Пирĕн авиаци Могилев, Карачев, Рославль чугунçул узелĕсене тапăнни

Майăн 28-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн инçене вĕçекен авиаци Могилев, Карачев, Рославль чугунçул узелĕсене тапăннă. Пирĕн самолетсем чугунçул эшелонĕсем çине, боеприпассен склачĕсем çине, тăшманăн войскисемпе техники пĕр çĕре пуçтарăнса тăнă вырăнсем çине бомбăсем пăрахнă.

Летчиксем Карачев, Рославль чугунçул узелĕсенче бомбăсем тӳрремĕнех эшелонсем çине ӳкнине курнă, вара çав эшелонсем çунма пуçланă тата взрывсем пулнă.

Пуринчен те нумайрах бомбăсем Могилев чугунçул узелĕ çине пăрахнă. «Сортировочнăй тата тавар станцийĕсен территорийĕнче чугунçул эшелонĕсемпе складсем нумай çуннă. Пушар вăхăтĕнче вăйлă взрывсем пулнă.

Производство планне срокчен 10 кун малтан тултарчĕ

КАНАШ. «Красный воин» артель коллективĕ май уйăхĕнчи производство планне майăн 20-мĕшĕ тĕлне ытлашшипех тултарчĕ. Çĕвĕ çĕлекен цехра ĕçлекенсем Фомин, Чепыркина, Игнатьева, Соснина юлташсем кашни кунах заданине 300—350 процент тултарса ĕçлеççĕ.

Г. Михайлов

Çураки вăхăтĕнче пысăк ĕç тухăçлăхĕ тата лайăх пахалăх кăтартса ĕçленĕшĕн, ĕççынни депутачĕсен райсовет исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсем тăратнă тăрăх, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри ХИСЕП ХАМИ çине çаксене кĕртнĕ:

Елчĕк районĕ тăрăх:

101. **Ленин ячĕпе тăракан колхоз** (председателĕ **Е. Г. Мартынов**). Колхоз çураки ĕçĕсене 9 кун хушшинче туса ирттернĕ, оборона фончĕ валли тата нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă районсене пулăшма 18 гектар акса хăварнă. Тĕштырăсене пĕтĕмпех сеялкăсемпе тата пысăк пахалăхпа акнă.

102. **Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз** (председателĕ **В. В. Зайцев**). Колхоз çураки ĕçĕсене 8 кун хушшинче вĕçленĕ, тĕштырăсене пурне те сеялкăпа акса хăварнă, оборона фончĕ валли планран ирттерсе 12 гектар тырă акса хăварнă.

103. **Орденлă „Ново-Ищеряково" колхоз** (председателĕ **Киселев**). Колхоз çураки ĕçĕсене пысăк пахалăхпа 7 кун хушшинче туса ирттернĕ, çураки планне 109 процент тултарнă, оборона фончĕ валли 3 гектар акса хăварнă.

104. **„Ново-Тоскаево" колхоз** (председателĕ **Кириллов**). Колхоз çураки ĕçĕсене пысăк пахалăхпа 8 кун хушшинче туса ирттернĕ, планпа палăртнă 63 гектар вырăнне 75 гектар акса хăварнă.

Ирĕке кăларнă районсенчи колхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе йĕркелесе яма пулăшар!

Иваново облаçĕнчи Родниковски районри Острецово колхозĕнчи колхозниксем Совет Союзĕнчи мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсем патне янă çыру

Хаклă юлташсем!

Нимĕçсем — фашистла ирсĕрсем пирĕн тăван çĕр çине нумай хĕнхурпа инкек илсе килчĕç. Ирсĕр нимĕçĕн урипусмă вырăнта ишĕлӳпе аркану тата вилĕм йĕре тарăнăн палăрса юлнă. Хуласем пулнă вырăнсенче — халĕ ĕнтĕ ишĕлчĕк чул купиçем кăна. Чечекленекен колхозлă ялсем пулнă вырăнсенче — кăмрăкпа кĕл, пушхир.

Нимĕç захватчикĕсем совет нумай хулисемпе ялĕсене аркатса юхăнтарчĕç. Вĕсем государствăна колхоз пурлăхĕсене çаратса пĕтерчĕç. Вĕсем пирĕн тăвансене нумай пиншер çынна чуралăха илсе кайрĕç. Фашистла çынвĕлерекенсен аллинчен нумай хĕрарăмсемпе ачасем тата ватă çынсем пĕтрĕç.

Гитлерла вăрă-хурахсене çаксемшĕн пуринтĕн те тавăратпăрах. Бандитсемпе ирсĕр пусмăрçăсене вĕсен юнлă тискер ĕçĕсемшĕн пуриншĕн те хаяр ответ тыттаратпăр.

Геройла Хĕрлĕ Çар хĕллехи наступлени вăхăтĕнче тăшмана хăватлăн пыра-пыра çапрĕ, нимĕç оккупанчĕсенчен совет çĕрĕн пысăк территорине ирĕке кăларчĕ. Сталин юлташăн майăн 1-мĕшĕнчи приказĕпе хавхаланса, пирĕн войскăсем тата пирĕн мĕнпур совет халăхĕ тăшмана çĕнĕрен тата хăватлăн пырса çапма хатĕрленеççĕ, çавăн пек çĕнĕрен хăватлăн пырса çапни пирĕн çĕре фашистла вăрă-хурахсенчен ирĕке кăларĕ.

Эпир пĕлетпĕр: нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă пирĕн хулисемпе ялсем çĕнĕрен чĕрĕлсе чечекленмĕ тытăнас вăхăт инçе мар ĕнтĕ.

Фашистла захватчиксем ишĕлтерсе пĕтернĕ хуçалăха çийĕнчех ура çине тăратма çăмăлах пулмĕ. Анчах та хамăр халăхăн пĕтĕм вăйне хурса, ирĕке кăларнă районсенчи пурнăçпа хуçалăха хăвăртрах йĕркелесе яма пулать. Çак ĕçре эпир, тылри облаçсенче пурăнакан колхозниксем нумай тума пултаратпăр.

Вăрçă вăхăтĕнче пирĕн колхоз хуçалăхĕ татах та ытларах çирĕпленчĕ. Пирĕн колхозра таварлă сĕт-çу ферми, сысна, сурăх тата кайăк-кĕшĕк фермисем пур. Выльăх-чĕрлĕхсен йышĕ пирĕн планпа пăхнинчен ытларах. Вăрçă кунĕсенче пирĕн колхоз фермисенче майракаллă шултăра выльăхсен хисепĕ 66 пуç, сурăхсен хисепĕ 106 пуç чухлĕ ӳсрĕ. Сыснасен йышĕ те нумай ӳсрĕ. Эпир çĕнĕ выльăх вити, пăру вити тата сурăх вити туса лартрăмăр. Выльăх-чĕрлĕхсен тухăçлăхĕ те ӳсрĕ. 1942 çулта кашни фуражлă ĕнерен планпа пăхнă 1.600 литр вырăнне 1.800 литр сĕт суса илнĕ.

Çакă вăл пире фронта пулăшас ĕçе вăйлатма май пачĕ. Аш-какай памалли плана эпир 1943 çулшăн пĕтĕмĕшпех пурнăçа кĕртнĕ. 10 центнер аш-какай оборона фондне панă.

Çуракине иртнĕ çулхисенчен ăнăçлăрах ирттертĕмĕр тата планран ытлашши оборона фончĕ валли 14 гектар тĕштырă акса хăвартăмăр.

Эпир нимĕç пусмăрлăхне тӳссе курман, мĕншĕн тесен Хĕрлĕ Çар тискер тăшманăн çулне пӳлсе лартрĕ. Нимĕç оккупанчĕсенчен сиен курнă хамăрăн тăвансене пулăшмăпăр-и вара эпир! Вырăс çыннисем пĕр-пĕрне инкекрен яланах çăлса кăларнă.

Пирĕн Иваново облаçĕнчи ĕççыннисем Сталинград тата Смоленск облаçĕсене тăванла анлăн пулăшса тăраççĕ. Облаçри хуласем Смоленск облаçĕнчи хуласене шефа илеççĕ. Çак тăванла пулăшăва ăна татах та ытларах вăйлатма пулать.

Ярославль облаçĕнчи Горшиха колхозĕн колхозникĕсем чĕнсе каланине ӳлтсе-явса, Острецоври Сталин ячĕпе тăракан колхозăн колхозникĕсем Смоленск облаçĕнчи Сычево районĕнчи «Вперед к социализму» колхоза пулăшма шут тытрĕç. Смоленщинăра пуян та малта пыракан пулнă çав колхозра нимĕçсем мĕнпур пурлăха çаратса тата пĕтерсе тăкни çинчен эпир пĕлтĕмĕр. Сиен курнă колхоза выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе хăвăртрах йĕркелесе ярас тĕлĕшпе пулăшас терĕмĕр эпир. Партипе правительство обществăллă выльăх-чĕрлĕхе ĕрчетес ĕçе аталантарасси çинчен нумаях пулмасть йышăннă хăйсен постановленийĕнче ирĕке кăларнă районсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе йĕркелесе ярасси çине уйрăмах тимлĕн çавăрăнса пăхнă.

Хамăрăн колхоз фермисенчен эпир планран ирттерсе ĕрчетнĕ выльăх-чĕрлĕх шутĕнчен Смоленск облаçĕнчи «Вперед к социализму» колхоз валли майракаллă шултăра выльăхсем 25 пуç, вăл шутра 1942 çулта çуралнă 10 тына пăру тата кăçал çуралнă пăрусенчен 15 пăру çитĕнтерсе паратпăр, çавăн пекех тата 15 сысна, 25 сурăх уйăрса паратпăр.

Кунсăр пуçне, колхозниксем харпăрхăй хуçалăхĕсенче çав ĕç валли татах темиçе пуç выльăх-чĕрлĕх ӳстерме кăмăл турĕç.

Анчах пирĕн пулăшу çакăнпа чарăнса тăмасть. Çав колхоза эпир унăн хуçалăхне пĕтĕмĕшпех юсаса çитериччен тăтăшах пулăшса тăма хамăр çине обязательство илетпĕр. «Вперед к социализму» колхоз çак 2—3 çул хушшинче хăйĕн фермисене, вĕсем нимĕçсем оккупациличчен мĕнле пулнă, çавăн пекех юсаса çитертĕр.

Совет Союзĕнчи мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене эпир пирĕн пуçару çумне хутшăнма чĕнетпĕр. Кашни колхоз, пирĕн примера курса, ирĕке кăларнă районсенчи колхозсенчен пĕрне шефа илтĕр тата унăн хуçалăхне хăвăртрах юсаса ура çине тăратма пулăштăр.

Нимĕçсем килсе тапăннипе сиен курнă хамăрăн тăвансене пулăшасси вăл — пирĕн таса тивĕçлĕх. Çапла тума пире колхозсем хушшинчи аслă туслăх хушать.

Сывă пултăр хăватлă колхоз стройĕ!

Сывă пултăр Совет Союзĕнчи халăхсен аслă туслăхĕ!

Çырăва çаксем алă пуснă: колхоз председателĕ — **И. Задоров**, колхозниксем — **В. Моисеева, С. Марков, И. Журавлев, М. Сироткина, Е. Андреева, Н. Моисеева, А. Сироткин, Г. Чистякова, Е. Яблокова, П. Чистякова, Е. Лебедева, А. Беликов, В. Виноградова, А. Виноградов, А. Сироткина** — звеньевая, **А. Харитонов, И. Григорьев, Н. Тихомирова, А. Чернышев, И. Рябиков, А. Чернышева** — звеньевая, **И. Гуськов** — бригадир, **Е. Нарина**—звеньевая, **И. Касатов, Т. Моисеев, Н. Смирнова, П. Смирнов, С. Папаев, К. Марков, М. Хамякова** т. ыт. те.

И. В. Сталин юлташ Куба посланникне А. Кончессо господина йышăнни

Майăн 28-мĕшĕнче СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин юлташ Кубăн СССР-ти Чрезвычайнăй Посланникне тата Полномочнăй Министрне А. Кончессо господина йышăннă. Йышăнура Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ пулнă.

Республика уйхирĕсенче

Çум çумлас ĕç пуçланчĕ

СĔНТĔРВĂРРИ, майăн 28-мĕшĕ. (Телефонпа). Пур колхозсенче те пекех тырăсене çумкурăкĕсенчен тасатас ĕç пырать. Чылай колхозсем ку ĕçе тĕплĕн туса пыраççĕ. Иртнĕ çулта клевер вырăнĕсене çумкурăкĕсенчен тасатас ĕçе хакламан пулсан, кăçал колхозниксем çак ĕçе чи малтан клевер участокĕсенчен пуçларĕç. Клевер çинче чылай çĕрте арăмути нумай. Çак курăка халĕ колхозниксем тĕпрен кăклаха тасатаççĕ.

«Кустарь» колхоз 4 гектар клевер участокне çумкурăкĕсенчен тасатрĕ, «Осоавиахим» колхоз 3 гектар çумланă. «Правда» колхоз 4 гектар çинчи сурхи тулла çумкурăкĕсенчен тасатса мульчировани туса хăварчĕ.

П. ТИТОВ.

* * *

ШĂХАСАН, майăн 28-мĕшĕ. (Хамăр корр.). Малта пыракан колхозсенче акнă тырăсене лайăх пăхса тăраççĕ. Тырăсене çумкурăкĕсенчен тасатас ĕçе тĕплĕн туса пыраççĕ. Районра 1.586 гектар çинчи тырăсене çумкурăкĕсенчен тасатнă. Киров ячĕпе тăракан колхоз членĕсем кок-сагыз акнă участока çумкурăкĕсенчен пĕтĕмĕшпех тасатнă, рецсене кăпкалатса пĕрремĕш хут удобрени панă. Çавăн пекех сурхи тырăсем акнă участоксенче те пурĕ 35 гектар çумкурăкĕсене çумласа тухнă. «Красное Сормово» колхозра иртнĕ кунсенче 5 гектар кок-сагыза, 40 гектар çинчи сурхи тырăсене çумкурăкĕсенчен тасатрĕç. Çак ĕç Çĕнĕ Чалкассинчи «Прожектор», Чалкассинчи «Париж Коммуни» колхозсенче те аван пулса пырать.

Анчах тырăсене çумкурăкĕсенчен тасатас ĕçе пур колхозсенче те тытăнманха. «Майăн 1-мĕшĕ», Чапаев ячĕпе тăракан тата ытти хăшпĕр колхозсенче çум çумлас ĕçе хакламаççĕ.

В. ВЕСЕЛОВ.

Пысăк хăвăртлăхпа ĕçлеççĕ

ЙОШКАР-ОЛА, майăн 28-мĕшĕ. (Телеграфпа). Пирĕнпе ăмăртса ĕçлекен Мари республики майăн 26-мĕшне çурхи тырăсем акмалли плана 72,5 процент, йĕтĕн акмалли плана 75,4 процент тултарнă. Çураки ĕçĕсене республикăра пурĕ 987 колхоз пĕтĕмĕшпех вĕçленĕ. Çуракинче тракторсемпе тумалли ĕç планне Мари АССР-ĕнчи МТС-сем 80,3 процент тултарнă. Сернурски МТС-ĕн Максимов юлташ ертсе пыракан трактор бригади çуракинче хăйĕн ĕç планне 200 процент пурнăçланă.

Тислĕк кăлараççĕ

ВĂРНАР. Хураçырмари «Ландыш» колхозра хĕрсех уя тислĕк кăлараççĕ. Çурхи тырăсемпе пахча-çимĕçсене кунта пĕтĕмпех акса е лартса пĕтернĕ. Халĕ колхоз хăйĕн пĕтĕм вăйне пухса, кĕрхи тырăсем акмалли пусса тислĕк кăларса, ăна хăвăртрах сухаласа хăварассишĕн кĕрешет. Халь пур колхозниксем те çак ĕçре. Тислĕке пур çĕртен те пухса илеççĕ, фермăсенчен те, колхозниксен килĕсенчен те кăлараççĕ.

Лавçăсем те, тиекенсем те пысăк çĕклепӳпе ĕçлеççĕ. Александрова юлташ бригадир пулса ĕçлекен бригадăра кашни кунах тислĕк кăлармалли нормăна икĕ хут ытла тултарать. Кунта лавçăсем Анна Николаева, Елизавета Васильева, Николай Федотов, Николай Малыгин çамрăк колхозниксем кункаçа уя 30-шар лав тислĕк кăлараççĕ. Çавăн пекех Анна Федорова ертсе пыракан бригадăра та тиекенсемпе турттаракансем ĕç нормине куллен 150—200 процент тултарса ĕçлеççĕ. Çапла колхоз кĕрхи çĕртме тумалли вырăна пурĕ 3.476 лав тислĕк кăларчĕ. Ĕç малалла пырать.

В. АРСЕНТЬЕВ.

Таджикистанра тырă вырма тухнă

СТАЛИНАБАД, майăн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Таджикистанра тырă вырма пуçланă. Чи малтан пуçласа тырă вырма кунта Жилыкульски районри Каганович ячĕпе тăракан колхоз тата Микоянабадски районри Молотов ячĕпе тăракан колхоз тухнă. Вĕсем тĕштырăсене вырса пуçтарнăçемĕн çапса пыраççĕ. Ку районсенче кăçал кĕрхи урпа та вăйлă пулнă. Урпа вырма ыран-паян Дагана-Киикски районпа Явански районри колхозсем тухаççĕ.

Пушар дружини лайăх ĕçлет

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Анат-Тимĕркассинчи «Красный борец» колхозри пушар дружини пушарпа кĕрешес ĕçе аван йĕркеленĕ. Пушар дружинин начальникĕ Плешков хăйне шанса панă ĕçе тăрăшса туса пырать. Ялта кашни кил умĕнчех каткапа е пичкепе шыв ларать. Урам хушшинчи çӳп-çапсене тасатнă, ятарласа 4 пĕве пĕвенĕ. Пушар сӳнтермелли хатĕрсене лайăх йĕркелесе хунă.

А. Кириллов.

Лашасене япăх пăхаççĕ

КАНАШ. Сиккасенчи Шмидт ячĕпе тăракан колхозри колхозниксем пĕрле пуçтарăнса ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ «Колхозсемпе совхозсенче лашасене [illegible] ўстермелли тата вĕсене [illegible] ĕçе лайăхлатмалли мерăсем çинчен» йышăннă постановленине сўтсе-явнă.

Постановленине сўтсе-явнă май колхозниксем нумай вăхăт хушши [illegible] палăрчĕç. Колхоз ку таранччен те лашасене [illegible] йышне ўстерес тĕлĕшпе кирлĕ пек ĕçлемест.

Лаша вăйĕпе тĕрĕс усă курмаççĕ. Кĕçресем [illegible] хăварас енĕпе ĕç япăх тăрать. Иртнĕ çул мĕн пурĕ те 9 тиха çеç илнĕ. Халĕ колхозра 3 çултан иртнĕ кĕçресем 57 [illegible]. Анчах кăçал та 8 тиха çеç çуралнă. [illegible] Лашасене тĕрĕс пăхса усрамаççĕ, вĕсен сывлăхĕсене [illegible]. Лаша апатне тĕрĕс усă курмаççĕ. [illegible]

[illegible]

Ума пысăк ĕçсем тăраççĕ. [illegible]

И. ПАЙДАШ.

Кăçал 141 ĕçкунĕ ĕçлесе тунă

Шăхасан районĕнчи Киров ячĕпе тăракан колхозри 62 çулхи колхозник Михайлов юлташ иртнĕ ялхуçалăх çулĕнче 239 ĕçкунĕ ĕçлесе тунăччĕ. Кăçал вăл 4 уйăх хушшинче 141 ĕçкунĕ ĕçлесе тунă та ĕнтĕ.

[illegible] — тет вăл.

Чăн та, Михайлов юлташ çĕршыва фронта пулăшма [illegible]. 1943-мĕш çулхи [illegible]

Вăл колхозра Михайлов юлташ пек колхозниксем татах нумай. [illegible]

В. ВЕСЕЛОВ.

Колхоз утарĕ пысăк тупăш парать

КАЛИНИНО. Тусĕ Мăратри «Клевер» колхозăн 25 çемьерен тăракан хурт-хăмăр утарĕ пур. Çав утара туллимар вăтам шкулта вĕрентекен комсомолка П. Григорьева ертсе пырать. Вăл хăй ĕçне юратса, тăрăшса туса пынипе пула, пĕлтĕрхи çул 12,75 центнер пыл, 17 килограмм воска пуçтарса илнĕ. Шкулти занятисем пĕтсен, Григорьева утара хурт-хăмăрсене пăхма каять. Колхозниксем каланă тăрăх, утартан пĕлтĕрхи пек пысăк тупăш нихăçан та илмен.

Кăçал та Григорьева юлташ çуллахи каникул вăхăтĕнче пчеловод пулса ĕçлеме килĕшрĕ. Иртнĕ çулта вăл хурт-хăмăр ĕрчетнĕ çĕрте ĕçлесе 182 ĕçкунĕ тунă. Çав вăхăтрах вăл вĕренўпе воспитани ĕçне те лайăх туса пырать. Вăл ертсе пыракан класс вĕренўре ĕлкĕрсе пырать. Ачасен ашшĕ-амăшĕсемпе вăл яланах çыхăнса ĕçлет. Ăна халăх хушшинчи политмассăллă ĕçре те час-часах курма пулать.

В. ЛАНДЫШ.

Учительсем ирĕке кăларнă районсене каяççĕ

Кăçалхи çул учитель институчĕсем 3.600 ытла педагог вĕрентсе кăлараççĕ, педагогика училищисем — 11.600 çын вĕрентсе кăлараççĕ. 3.600 çамрăк учитель нимĕçсен фашистла оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă Воронеж, Курск, Сталинград, Ростов облаçĕсене, Краснодарпа Ставрополь крайĕсене, Кабардино Балкар АССР-не каяççĕ. (ТАСС).

Осоавиахим организацийĕсен социализмлă ăмăртăвĕн итогĕсем

Осоавиахимăн Чăваш Республикинчи Центральнăй Совечĕ çак кăхра Осоавиахимăн районсенчи тата хуласенчи организацийĕсен социализмлă ăмăртăвĕн 1943 çулхи пĕрремĕш кварталти итогĕсене турĕ. Ăмăртăва районсенчи 11 организаци тата хуласенчи 3 организаци хутшăннă.

Çак организацисенчен чылайĕшĕ социализмлă ăмăртăва пуçламĕш организацисене анлăн явăçтарнă. Осоавиахимăн Ишлей районĕнчи совечĕ лайăх результатсем кăтартрĕ. Унти пуçламĕш организацисем тăтăшах пухусем туса оборона ыйтăвĕсем тăрăх докладсем иттернĕ, хăйсен ĕçĕсемпе малашнехи задачăсем çинчен сўтсе-явнă. Районри оргбюро уйăхра ик-виçĕ хутчен черетри ĕçсем çинчен сўтсе-явнă. Осоавиахим районсовечĕ пуçламĕш организацисене куллен контрольлесе, пулăшса тăнă.

Осоавиахимăн Ишлей районсовечĕ халăха ПВХО-на вĕрентес ĕçе вĕçленĕ. Пĕрремĕш кварталта член укçи пухмалли плана 233 процент тултарнă. Халĕ çар ĕçне вĕрентмелли ытти программăсене пурнăçлать. Осоавиахим районсовечĕн председательне Милютин юлташа „ЗОР“ значокпа наградăлама тăратнă.

Осоавиахимăн Улатăр хула совечĕ те хăйĕн ларăвĕсенче пуçламĕш организацисен председателĕсен отчечĕсене итлет, вĕсен ĕçĕнчи ситменлĕхсене вăхăтра сирме пулăшать. Çавна пула унти пуçламĕш организацисем хăйсен ĕçне лайăхлатса пыраççĕ. „Красная швея“ артельри организаци (председателĕ Попова юлташ) рабочисен 84,3 процентне пĕрлештерсе тăрать. Артельре ĕçлекенсем пурте ПВХО нормисене панă. Унта ĕçлекенсенчен организациленĕ икĕ подразделени çар ĕçне вĕренсе пĕтерне.

Çакăнпа пĕрлех социализмлă ăмăртăва хутшăнман районсемпе пуçламĕш организацисем те пур. Вĕсен шутне чи малтанах Осоавиахимăн Комсомольски, Первомайски, Красноармейски, Калинински, Çĕрпў райсовечĕсене кĕртмелле. Осоавиахимăн Çĕрпў райсовечĕ социализмлă ăмăртăва организацилес ĕç çине ответсăр пăхнă. Райсовет председателĕ Герасимов юлташ организацисене обязательствăсем çыртарнипех лăпланса ларнă, пуçламĕш организацисенче социализмлă ăмăртăва тивĕçлипе организацилемен. Çакăн пек „ертсе пынипе“ районри чи пысăк организацисем (фельдшерсем хатĕрлекен шкулти тата пир-авăр фабрикинчи организацисем) салана-салана кайнă.

Пĕрремĕш кварталта Ишлей районĕсĕр пуçне Осоавиахимăн Хĕрлĕ Чутай (райсовет председателĕ Чеченешкин юлташ), Чкаловски районсенчи (райсовет председателĕ Краснов юлташ), Улатăр хулинчи (хула совет председателĕ Фундылер юлташ) органицийĕсем начар мар ĕçленĕ.

Осоавиахимăн Комсомольски, Первомайски, Шăмăршă тата ытти районсенчи организацийĕсем Осоавиахим членне илес ĕçе сўрĕк ертсе пыраççĕ, член укçи пухас тĕлĕшпе ĕçлемеççĕ, халăха çар ĕçне вĕрентес тĕлĕшпе те начар ĕçлеççĕ, çар пропаганди çинчен пачах манса кайнă.

Халăх хушшинче çар пропагандине вăйлатса, социализмлă ăмăртăва çĕнĕ вăйпа сарса ярса, Осоавиахимăн республикăри организацийĕсен хăйсен умĕнче тăракан задачăсене ăнăçлăн пурнăçлассишĕн кĕрешмелле. Чи малтанах Осоавиахимăн кашни пуçламĕш организацине совет патриочĕсен оборонăллă чăн-чăн боевой организацийĕсем туса хумалла, халăха обязательнăй йĕркепе ПВХО-на вĕрентес ĕçе тата харпăрхăйне хўтĕлеме тунă группăсенче тăракансене вĕрентес ĕçе вĕçлемелле. ПВХО-на 1941 çулта вĕреннĕ мĕнпур çынсене халĕ çĕнĕ программăпа тепĕр хут вĕрентме тытăнмалла.

А. НИКИТИН.
Осоавиахимăн ЧАССР Центральный Совечĕн оргинструкторски отдел начальникĕ.

Ялти çамрăксене çар физкультури тĕлĕшпе хатĕрлесси

Колхозсемпе совхозсенче тата МТС-сенче халĕ 6.500 физкультура коллективĕ шутланса тăрать, вĕсенче 200.000 ытла çамрăк тăрать. Физкультурăпа спорт ĕçĕсен Пĕтĕм Союзри Комитечĕ вырăнти комитетсене колхозри çамрăксем хушшинче çар спорчĕн массăллă ĕçне вăйлатса анлăрах сарса яма хушнă. Ку ĕçе ялти интеллигенцие, отечественнăй аслă вăрçăра пулнă çынсене, комсомолецсене явăçтармалла.

Ку ĕçре çамрăксене спортăн çарта кирлĕ пулакан мелĕсене вĕрентесси пурнинчен малта тăмалла. Çак тĕлĕшрен майпа июнь уйăхĕсенче пур районсенче те штык вĕççĕн тăрса кĕрешме вĕрентекен, ГТО комплексне вĕрентекен, ишме тата шыв чăрмавĕсем урлă каçма вĕрентекен обществăллă инструкторсен семинарĕсем пулса иртмелле. Çу каçиччен çакăн пек ăмăртусем пулса иртмелле: чи лайăх чупакан-кроссмен, чи лайăх гранатометчик, чи лайăх ишекен, чи лайăх велосипедист ятне илмелли тата спортăн нацилле майĕсем тĕлĕшпе мала тухмалли ăмăртусем пулмалла.

Ялти физкультурниксен вăйĕпе темиçе çĕршер спорт площадкисем, тĕрлĕрен чăрмав хирĕсем, гимнастика хулисем тăва-тăва лартаççĕ. (ТАСС).

Шкулсенчи пĕлў тĕрĕслевĕсем

Çулталăк хушши тăрăшса ĕçленин результачĕ

КАНАШ. Кивĕ Шелттемри туллимар вăтам шкулта вĕренекенсем пур класенче те 100 процентлĕпех пĕлў тĕрĕслевĕсене çўреççĕ. Ку таринччен пулса иртнĕ тĕрĕслўсем ачасем вĕренў программине лайăх пĕлнине кăтартрĕç.

6-мĕш класра вырăс чĕлхипе «начар» паллă илекен пĕрре те пулмарĕ. Класра вĕренекенсенчен 36 проценчĕ «отлично» паллăсем илчĕç.

Çавăн пекех 7-мĕш класра тăван чĕлхепе тĕрĕслў пулчĕ. Класри 24 вĕренекен пурте тĕрĕслеве пынă. Вĕсем тăван чĕлхепе çирĕп пĕлў илнине кăтартса пачĕç. Тăван чĕлхене вĕрентекен учитель Е. Шустимов юлташ хăйĕн ĕçне лайăх туса пынă.

4-мĕш класран вĕренсе тухакан ачасем те (учителĕ фронтовик Т. Зайцев юлташ) тăван чĕлхепе лайăх результатсем кăтартрĕç. Класри 23 вĕренекен тĕрĕслеве пурте пынă.

Учительница О. Васильева юлташ 5-мĕш класра арифметикăна тĕплĕн вĕрентнĕ.

Вăрçă йывăрлăхĕсене çĕнтерсе, кăçал эпир вĕренў ĕçĕнче чылай пысăк ситĕнў турăмăр. Халĕ çĕнĕ вĕренў çулне хатĕрленетпĕр, шкул ачисене ялхуçалăх ĕçĕсене хутшăнма хатĕрлетпĕр.

Г. ЗАЙЦЕВ,
Вĕренў пайĕн заведующийĕ.

Малалла та фронт ыйтнă пек ĕçлĕпĕр

Кăçал пирĕн районри колхозсем сураки ĕçне иртнĕ çулхинчен маларах тата лайăхрах вĕçлерĕç. Пĕрчĕллĕ культурăсене район 11,5 кун хушшинче акса пĕтерчĕ. Майăн 16-мĕшĕ тĕлне (16 кун хушшинче) эпир пĕтĕм сураки планне 105 процент тултартăмăр. Иртнĕ çулхипе танлаштарсан, кăçал пирĕн ĕç вăйĕ, уйрăмах туртăм вăйĕ, сахалтарах пулчĕ. Çапах та çурхи тырăсене район иртнĕ çулхинчен 934 гектар ытларах акса хăварчĕ, вăл шутра оборона фондне хывма тата нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă районсене пулăшма 804 гектар акнă.

Агротехникăллă мероприятисене пурнăçлас тĕлĕшпе те колхозсем пысăк ĕçсем туса ирттерчĕç. 5.546 гектар тырра (пĕтĕм планран 56 процентне) сеялкăсемпе акнă, çак вăрлăхăн пысăк пайне яровизацилесе, протравливани туса акнă; 1.564 гектар çинчи кĕрхи калчасене апат панă, 804 гектар çинчи калчасене сўрелене. План тăрăх уя 65 пин тонна тислĕк тăкмалла пулнă, эпир 65.907 тонна кăлартăмăр.

Кăçалхи суракине чылай колхозсем кĕске вăхăт хушшинче вĕçлерĕç. Сăмахран, «14 лет Октября» колхоз (председателĕ В. Тимофеев) пĕтĕм ĕçе пĕр эрне хушшинче вĕçлерĕ, сураки планне 109 процент тултарчĕ, «Шуçăм» колхоз 8 кун ĕçлесе плана 109 процент тултарчĕ.

Колхозниксемпе колхозницăсем акара нихçанхи пек мар хастарлăн ĕçлерĕç. Вĕсем ăмăртăва вăйлатса пырса, хăйсен нормисене ирттерсе тултарса пычĕç. «Доброволец» колхозра Елена Виноградовăпа Иван Урмасов сухаçăсем нормăсене 110—125 процент, «Шуçăм» колхозра 60 çулхи Якоз Кириллов сухаçă нормăна 145—150 процент, тата колхозник Михаил Андреев акнă çĕрте нормăна 150—160 процент тултарса ĕçленĕ.

Уйра хĕрўллĕ ĕç пынă вăхăтра пирĕн колхозсенче çĕршер агитатор ĕçлерĕç. Вĕсем кашни кун колхозниксем хушшинче калаçусем туса ирттернĕ, хаçат-журналсем вуласа панă, стена хаçачĕсем кăларнă. Çапла майпа вĕсем социализмлă ăмăртăва сарса пыма пулăшнă. Чылай колхозсенче малта пыракан бригадăсене пама куçса çўрекен Хĕрлĕ Ялавсем тунă, кăтарту хăмисем организациленĕ. Çакă та колхозниксене тухăçлăн ĕçлеме хавхалантарнă. Тавăт ялсоветĕнче, акă, ялсоветăн куçса çўрекен Хĕрлĕ Ялавне «Новый путь» колхоз тытса тăнă, майăн 6-мĕшĕнче вара вăл ялава «Комбайн» колхоз илме тивĕçлĕ пулчĕ. Çакă вăл ку ялсоветри колхозсене çеç мар, юнашар колхозсене те ĕçри хăвăртлăхсене ўстерме пулăшрĕ. «Доброволец» колхозра бригадăсене куçса çўрекен хĕрлĕ флажок тунă. Ку флажока суракин иккĕмĕш кунĕнчен пуçласа ака пĕтиччченех комсомолец Кашкин юлташ ертсе пыракан бригада тытса тăчĕ.

Сураки ĕçне шкулсенче вĕренекенсемпе комсомолецсем активлăн хутшăнчĕç. Вĕсенчен хăшпĕрисем агитаторсем, беседчиксем, теприсем сухаçăсем пулса ĕçлерĕç. «9 съезд ВЛКСМ» колхозри пионерсем колхоза çĕрулми касса лартса панă, колхозри комсомолецсем Семеновăпа Антипова ĕçре хăйсем пример кăтартса, ытти комсомолецсемпе çамрăксене ĕçлеме организацилесе пынă.

Сталин юлташăн майăн 1-мĕшĕнчи приказĕ колхозниксемпе колхозницăсене вăйлă тыршул туса илес ĕçре мĕнпур вăя хурса ĕçлеме хавхалантарать. Çулпуç приказне вĕсем тухăçлă ĕçпе ответлеме тăрăшаççĕ. Халĕ колхоз уйхирĕсенче ĕç малалла пырать. Чылай колхозсем пăрхи çĕртме тăваççĕ. Буденный ячĕпе тăракан, «Броневик», «Доброволец» колхозсем, акă, темиçе вуншар гектар çĕртме сухине тунă. Çак кунсенче колхозсем пахча-çимĕçсем лартса пĕтерчĕç, çитес кунсенче помидорпа купăста лартса пĕтереççĕ.

Умра тата пысăк задачăсем тăраççĕ — уйри тырпула лайăх пăхса ўстерсе, ăна пĕр тăккаламасăр, вăхăтра пухса илмелле. Çак ĕçсене те пирĕн районри колхозниксем пысăк хастарлăхпа пурнăçлĕç.

М. ФЕДОТОВ,
ВКП(б) Элĕк райкомĕн секретарĕ.

ВУТĂ ХАТĔРЛЕССИ — ГОСУДАРСТВĂН ПЫСĂК ĔÇĔ

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан отечественнăй аслă вăрçă промышленность умне пысăк задачăсем кăларса тăратрĕ. Сталин юлташ майăн 1-мĕшĕнчи приказра фронт валли икĕ хут нумайрах вăй хурса ĕçлени кирлĕ, терĕ. Ку ăнтĕ промышленноçпа транспорта тип-тикĕс ĕçлеттерме кирлине пĕлтерет. Промышленноçпа транспорт мĕн кирли пурте, вăл шутра топливо та, çителĕклĕ пулсан çеç пĕр чарăнусăр лайăх ĕçleme пултараççĕ. Çавăнпа та вутă хатĕрлессин хальхи вăхăтра калама çук пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Предприятисен руководителĕсем çакна лайăх ăнланса илнĕ çĕрте вĕсем халĕ, вăхăта сая ямасăр, 1942—43 çулхи сезон валли вутă хатĕрлеме тытăннă. Чăваш АССР Наркомпищепромĕ, Наркомздрав, Хусан чугунçул коллективĕсем 1942—43 çулхи кĕркуннепе хĕллехи сезон валли вутă хатĕрлес плана ытлашшипех тултарнă. Вырăнти предприятисемпе учрежденисем валли вутă хатĕрлес тĕлĕшпе Улатăр, Йĕпреç, Калинино, Тăвай, Пăрачкав районĕсем начар мар ĕçлерĕç.

Анчах та хăшпĕр районсем паянхи кунччченех çак ответлă ĕç çине сиелтен пăхаççĕ. Уйрăмăнах Куславкка, Комсомольски, Куванкино, Çĕмĕрле районĕсем тата Канаш хули начар ĕçленине палăртмалла.

Нумаях пулмасть Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ «Çуллахи вăхăтра вутă хатĕрлесси çинчен» постановлени йышăнчĕç.

Вутă хатĕрлес плана вăхăтра пурнăçлас тĕлĕшпе Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ райсоветсемпе горсоветсене ССР Союзĕн Совнаркомĕ 1942 çулхи августăн 10-мĕшĕнче кăларнă постановленипе усă курма ирĕк панă. Вутă хатĕрлес ĕçе хулари рабочисемпе служащисене, ниçта ĕçлемен килхуçи хĕрарăмĕсене вăрçă вăхăтĕнчи ĕç повинноçĕ йĕркипе икĕ уйăхлăха мобилизацилемелле.

Ĕçлеме мобилизациленĕ çынсене ĕçукçи хăй ĕçленĕ вырăнта çак йĕркепе тўлеççĕ: вĕсен çемьинче ĕçлеме пултарайманнисем пулсассăн — 80 процент, çемьере ĕçлеме пултарайманнисем çук пулсан — 40 процент.

Рабочисемпе служащисене тата ытти çынсене вутă хатĕрленĕ чухне ĕçукçи нормăна тултарнă тăрăх тўлеççĕ. Сезон вăхăтĕнче кашни çыннăн 100 кубометр вутă касса купаласа хумалла. Вăрманта ĕçлекен хăйĕн нормине срокчен тултарать пулсан, ăна ĕçлессинчен хăтараççĕ.

Вăрманта вутă касса хатĕрленĕ чухне техникăллă правилăсене пăхăнса ĕçлемелле. Ĕçлекенсем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе тивĕçлипе туса пымалла. Социализмлă ăмăрту ĕçре тĕп вырăнта пулмалла. Ĕçлекенсенчен агитаторсем уйăрса лартмалла. Фронтовой бригадăсем организацилесе, ĕç тухăçлăхне ўстерсе пымалла, панă задание ытлашшипех тултарассишĕн кĕрешмелле.

Н. ДОЛБИЛОВ.

Ĕç тухăçлăхĕ ўсет

ЕТĔРНЕ. Райпромкомбинатри суккăрсен корзинкăсем çыхакан, вĕренсем явакан цехĕ ĕç тухăçлăхне куллен ўстерсе пырать. Вăл апрель планне 240 процент пурнăçланă. Цех коллективĕ май уйăхĕнчи производство заданине 300 процентран кая мар тултарма обязательство илнĕ. Кунти паллă стахановецсем Виноградов юлташ ĕç заданине куллен 300 процент, Зайчиков юлташ 340 процент, Петрова юлташ 355 процент тултарса ĕçлеççĕ.

Юлашки кунсенче цехра урайсем шăлмалли щеткăсем тума тытăнчĕç. Ку çĕнĕ ĕçре те цех коллективĕ пысăк производствăллă çĕкленўпе ĕçлесе пырать.

Н. Егорова.

Новороссийскран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре пулса иртнĕ сывлăшри çапăçусем

Майăн 28-мĕшĕнче Новороссийскран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн сывлăшри вăйсем тăшман авиацийĕпе çапăçнă. Сывлăшра нумай хутчен пулса иртнĕ çапăçусенче пирĕн летчиксем нимĕçсен 54 самолетне персе ўкернĕ. Унсăр пуçне тата зенитнăй артиллери тăшманăн 12 самолетне пĕтерсе тăкнă. Çапла вара пĕр кун хушшинче пĕтĕмпе 66 нимĕç самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 26 самолет пĕтнĕ.

Чехословаки республикин правительствине СССР территорийĕнче чехословаксен бригадине вăрçă вăхăтĕнче усрамашкăн укçа-тенкĕ, материалсем тата пулăшу парса тăрасси çинчен Совет Союзĕпе Чехословакия килĕшў туни

Майăн 28-мĕшĕнче «Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн правительстви Чехословаксен бригадине СССР территорийĕнче вăрçă вăхăтĕнче усрамашкăн Чехословаки республикин правительствине укçа-тенкĕ, материалсем тата пулăшу парса тăрасси çинчен тунă килĕшĕве алă пуснă.

Çав килĕшĕве СССР правительстви полномочи панипе Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн заместителĕ **А. Е. Корнейчук** тата Чехословаки правительстви полномочи панипе Чехословаки республикин СССР-ти Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посолĕ **Зд. Фирлингер** господин алă пуснă.

Ют çĕршывсенче

Хĕçпăшала кивçен е аренда йĕркипе памалли закона пурнăçлани çинчен Рузвельт конгреса янă послани

ВАШИНГТОН, майăн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Хĕçпăшала кивçен е аренда йĕркипе памалли закона пурнăçлани çинчен Рузвельт США конгресне послани янă.

„Пĕтĕм Африкăна халĕ тăшмантан тасатнă,—тенĕ посланире.— Африкăри халăхсене нацистсем-фашистсем пуçпулса тăрассинчен хăтарнă. Африкăра эпир вăйлă пырса çапрăмăр, ăна Берлинпа Римра тата Токиора туйрĕç пулмалла. Эпир халлĕхе ирĕке кăларайман темиçе миллион çынна шанчăк патăмăр. Африкăна ирĕке кăларни малашне мĕн пулассине кăтартса тăрать. Германипе Японие хирĕç çапăçас ĕçре малашне пире халь ирĕке кăларнă районсен туллин пулăшса тămалла пулать, вĕсен ресурсĕсемпе усă курмалла пулать. Çакă вăл питĕ кирлĕ ĕç пулса тăрать“.

„Эпир çĕнтерў патне çывхарса пынă май пĕрлешўллĕ нацисем ирĕке кăларнă районсенчи выçă пурăнакан çынсене продовольстви тата чирлисене медикаментсем парса тăнă тата халĕ те парса тăраççĕ“,— тенĕ малалла посланире.

„Халĕ эпир кирек мĕнле хĕçпăшалсем тăвас тĕлĕшпе те агрессорсенчен иртерсе ятăмăр,—тенĕ посланире.—Вăрçăра питĕ пысăк вăй туса хумашкăн эпир хĕçпăшалсем çителĕклĕ парса тăратпăр, эпир ăна наступленисем тумашкăн паратпăр, çав наступленисем Берлинпа Токиона çитсен çеç чарăнĕç. Хĕçпăшала кивçен е аренда йĕркипе памалли закона виççĕмĕш çул пурнăçласа пынă май, пирĕн хĕçпăшаллă вăйсем, эпир паракан хатĕрсем тата пĕрлешўллĕ нацисем пĕрле кĕрешни—тăшмана пĕтĕмпех çĕнтерес вăхăта çывхартаççĕ“.

Рузвельт çапла каланă: 1941 çулхи мартăн 11-мĕшĕнчен пуçласа 1943 çулхи апрелĕн 30-мĕшне çитиччен Пĕрлешўллĕ Штатсем хĕçпăшала кивçен е аренда йĕркипе памалли закон тăрăх пĕтĕмпе 11.102 миллион долларлăх пулăшу панă. Çав закон тăрăх, çак апрель уйăхне шутламасассăн (апрель уйăхĕнчи даннăйсем çук-ха) пĕтĕмпе 7.105 миллион долларлăх япала ăсатнă; ку шута самолетсемпе суднăсем кĕмеççĕ.

Хĕçпăшала кивçен е аренда йĕркипе памалли закон тăрăх Пĕрлешўллĕ королевствăна 3.116 миллион долларлăх, Совет Союзне 1.822 миллион долларлăх, Африкăпа Çывăхри Хĕвелтухăçне пĕр миллиард долларлăх, Китая, Индие, Австралие тата Çĕнĕ Зеландие 875 миллион долларлăх, ытти çĕршывсене 292 миллион долларлăх хĕçпăшалсемпе хатĕрсем тăратнă.

Пĕрлешўллĕ Штатсем Совет Союзне çав закон тăрăх яракан тĕрлĕ йышши хĕçпăшалсемпе çар оборудованине кăтартса тухса, Рузвельт çапла каланă: Совет Союзĕ çав закон тăрăх хăй енчен пире пулăшса тăрать, тенĕ.

Рузвельт каланă тăрăх, США апрелĕн 30-мĕшĕччен Совет Союзне пĕр миллион тонна ытла продовольстви янă, çав продовольствин çуррине юлашки ултă уйăх хушшинче янă.

Африкăпа Çывăхри Хĕвелтухăçне пулăшни çинчен Рузвельт çапла каланă: хĕçпăшала кивçен е аренда йĕркипе памалли закон тăрăх тăратнă хĕçпăшалсем Çурçĕр Африкăра тăшмана çĕнтерме нумай пулăшрĕç, вĕсем тата Çурçĕр Африкăри гражданла халăха пулăшма тата унта питĕ кирлĕ чĕртаварсем тăвас ĕçе çĕнĕрен ура çине тăратма май пăраççĕ, тенĕ.

Пĕрлешўллĕ Штатсем çавăн пекех тата Иракăн, Иранăн, Египетăн тата Çывăхри Хĕвелтухăçĕнчи ытти çĕршывсен гражданла экономикине пулăшса тăраççĕ, вĕсем тата Турцие хĕçпăшалсем, çар производстви валли кирлĕ материалсем ярса тăраççĕ.

Рузвельт тата акăлчансем Совет Союзне хĕçпăшалсем, çав шутра Канадăра тăвакан хĕçпăшалсене чылай тăратнине палăртнă.

Хĕçпăшала кивçен е аренда йĕркипе памалли закон тăрăх Китая пулăшни çинчен Рузвельт çапла каланă: „Китая хĕçпăшалсемпе тĕрлĕ хатĕрсем ытларах тăратмашкăн çĕр çинче çĕнĕ çулсем тăвасси тата Бирма çулне уçасси пирĕн стратегиллĕ тĕллев пулса тăрать“, тенĕ.

Иден Портсмутра тухса калани

ЛОНДОН, апрелĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англин ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ Иден Портсмутра „Çĕнтерў çуначĕсем“ ятлă кампани пынă май сăмах тухса каланă.

Тулашри политика çинчен Иден çапла каланă: „Эпир Италипе Германин çар машинине пур çĕрте те сывлăшран çапа-çапа аркатăпăр. Италие сывлăшран пырс... тапанма халь нимĕн те чарса тăмасть. Хамăр алăри пур майсемпе те усă курса, вăйлăн атакăлăпăр. Эпир фашизма пĕтерсе тăкасшăн, эпир Италия гитлерла Германипе пĕрле вăрçма пăрахиччченех Италие хирĕç хамăрăн пĕтĕм вăйпа кĕрешĕп“.

Итальянецсем халь тўсекен тата малашне тўсес асапсемшĕн Муссолинипе унăн фашистла юлташĕсем айăплă. Итали халăхĕн хăйĕн каламалла: сывлăшран тапăнса бомбăсем пăрахнине вăл вĕçне çитиччченех тўссе пурăнасшăн-и, çук-и, эпир сывлăшран тапăнма хăçан чарăнасси унтан хăйĕнчен килет“.

Авиаци пыра-пыра тапăнни çинчен Иден çапла каланă: „Паян Германипе Италие черет пырса çитрĕ. Ку ĕçе эпир пуçламан. Никам та мар, Геринг Варшавăпа Роттердама ишĕлтернипе савăнса пурăнчĕ. Халĕ ку ĕçе пĕтерсе лартнă ĕнтĕ. Нацистла тата фашистла режимсене пĕтĕмĕшпех аркатса тăкиччченех çакăн пек пулса пырĕ. Ку тĕлĕшпе никам та урăхла пуласса шанса ан тăтăр“.

Иден малалла çапла каланă. Шыв айĕнчи вăрçă çинчен калакан хыпарсем ĕлĕкхи пекех лайăх. Суту-илў флочĕн çухатăвĕсем чакса пыраççĕ, тăшмана пĕтерсе тăкнă подводнăй лодкисен хисепĕ ўснĕçемĕн ўссе пырать. „Ку çапăçу мĕнпе пĕтесси паллă пулса тăман-ха, анчах та ку тĕлĕшпе пирĕн ĕçсем ĕлĕкхинчен лайăхрах пыраççĕ.—тенĕ Иден.

РУЗВЕЛЬТПА ЧЕРЧИЛЛЬ ХУШШИНЧИ КАЛАÇУСЕМ МĔНПЕ ПĔТНИ ÇИНЧЕН ПĔЛТЕРНИ

НЬЮ-ЙОРК, майăн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Рузвельтпа Черчилль хушшинче Вашингтонра пынă калаçусем мĕнпе пĕтни çинчен тунă официальнăй заявленире çапла каланă: «Пĕрлешўллĕ штабсен Вашингтонра çак кунсенче пулнă калаçăвĕсем вăрçăн пур фрончĕсенче те малашне пулмалли операцисем тĕлĕшпе пĕтĕмĕшпех калаçса татăлнипе вĕçленчĕç», тенĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Майăн 29-мĕшĕнчен пуçласа çак çулхи июнĕн 3-мĕшĕччен Шупашкар горсобесĕнче пенси илсе тăракан хулари мĕнпур пенсионерсене, пенсие почта урлă илекенсене те, ĕçленĕ вырăнта илекенсене те, çавăн пекех тата 3-мĕш группăра тăракан пенси илекен вăрçă инвалидĕсене те регистрацилеççĕ.

Пенсие вĕсене пăхса тăрантарса усракан çын вилнĕ пирки илсе тăракан пенсионерсем хăйсен урам комитетĕнчен çемьере миçе çын пурри çинчен пĕлтерекен справка илсе пымалла, 3-мĕш группăра тăракан инвалидсен ĕçлекен вырăнтах хăйсем ĕçлени çинчен пĕлтерекен справка илсе пымалла.

Регистрацие пыман пенсионерсене малашне пенси пама пăрахаççĕ.

Горсобес.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редакци секретарĕн—4—26, парти пурнăç пайĕн—3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23.

КТ 2?9 Типография № 1, Управления полиграф промышленность при СНК ЧАССР Заказ № 2. Ф. б. 53 84 п. л.